Василий Давыдов-Анатри

**Мухтанатпăр санпа, Чăваш ен**

Савăнатпăр санпа, Чăваш ен,
Çыннусем пархатарлă, ĕçчен.
Çĕкленеççĕ кунта хуласем,
Çулсерен çĕнелеççĕ ялсем.

Мухтанатпăр санпа, Чăваш ен,
Атăлпа эс пĕрле ĕлĕкрен.
Парнелет вăл пире ырлăхне,
Парнелет вăл пире хăватне.

Тав тăватпăр сана, Чăваш ен,
Çĕнĕ куншăн хастар кĕрешен.
Эс пĕрле ĕмĕрех Раççейпе
Авалтан пĕр-пĕрне шаннипе.

*Давыдов-Анатри, В. Мухтанатпăр санпа, Чăваш ен / В. Давыдов-Анатри // Юррăмсем-çунатăмсем : сăвăсем / В. Давыдов-Анатри. – Шупашкар, 1997. – С. 13.*